# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

50 (7367) № ✻ Эрне кун, 2006 çулхи июнĕн (çĕртме) 16-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


Ĕçпе юрă уявĕнче

# 53-мĕш Акатуй нумайлăха асра юлĕ








Çурхи ака-суха ĕçĕсене вĕçленĕ хыççăн Акатуй уявне ирттерессi йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Иртнĕ шăмат кун Лантăш вăрманĕн уçланкинче пулнă уяв район çыннисемшĕн нумайлăха асра юлĕ.

Муркашсене саламлама ЧР Президенчĕ Н.В. Федоров хăйĕн мăшăрĕпе Светлана Юрьевнăпа килсе çитрĕ. Уяв "Çĕрĕм-шывăм, чечеклен" юрăпа ташă композицийĕпе уçăлчĕ.

Чи малтанах уçланкăна пуçтарăннисене район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов саламларĕ. Çавна май паян патшалăх ял хуçалăхне, уйрăм хушма хуçалăха аталантарма пулăшнине, çав майпа усă курмаллине палăртрĕ.

Юрий Александрович ял ĕçченĕсене çур акине ăнăçлă вĕçленĕ ятпа тав турĕ.

ЧР Президенчĕ Н.В. Федоров район çыннисене саламланă май çакна палăртрĕ:

– Муркашсем чăннипех те тăрăшуллă ĕçлеççĕ. Татах та ытларах тума пултаратăр эсир,-терĕ вăл. Николай Васильевич ĕçре маттуррисене тĕрлĕ министерствăсен Хисеп грамотисемпе чысларĕ. Унтан вăл "Вĕрентӳ" наци программипе килĕшӳллĕн РФ Президенчĕн грантне – 1 миллион тенке тивĕçнĕ Муркаш лицейне, ЧР Президенчĕн грантне – 200 пин тенке тивĕçнĕ Калайкасси шкулне çав суммăна илме ирĕк паракан документсене пачĕ.

Районти медицина ĕçченĕсемшĕн те асра юлчĕ çак кун. Николай Васильевич районти тĕп больницăна валли "Сывлăха сыхласси" наци проекчĕпе килĕшӳллĕн 3 миллион тенкĕлĕх диагностика оборудованийĕ тата "Васкавлă пулăшун" 3 машини килсе çитни пирки калакан документсене парса саламларĕ: пĕтĕмпе 4 миллион та 765 пин тенкĕлĕх. Ку çеç те мар. 2-мĕш номерлĕ тĕп больница валли тепĕр 729 пин тенкĕлĕх диагностика оборудованийĕ илмелли документ та тем пысăкăш парне пулчĕ Президентран. Президент пирĕн район республикăри "Чăваш Республикинче 2010 çулччен ялсене социаллă аталантарасси" тĕллевлĕ программăпа та ăнăçлă ĕçленине палăртрĕ. Отарккăри Зинаида Геннадьевнăпа Юрий Иосифович Скворцовсен çемйине çурт лартма 142 пин тенкĕ субсидие тивĕçни çинчен калакан Свидетельствăна парса чысларĕ. Çак чыса Турайĕнчи Надежда Николаевнăпа Евгений Витальевич Орловсен (140 пин тенкĕлĕх), Мулкачкассинчи Роза Ивановнăпа Сергей Валерианович Наумовсен (120 пин тенкĕлĕх), Муркашри Татьяна Алексеевнăпа Александр Михайлович Рыбниковсен (140 пин тенкĕлĕх) çемйисем тивĕçрĕç.

**Сăн ӳкерчĕксенче: уяв сцени çинче - район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, ЧР Президенчĕ Н.В. Федоров; уявра.**

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

## Вырсарни кун – Медицина ĕçченĕсен кунĕ

**СЫВЛĂХ СЫХЛАВĔН ĔÇЧЕНĔСЕМ ТАТА ВЕТЕРАНĔСЕМ!**
**Сире професси уявĕпе саламлатăп!**

Сире канăççăр ĕçшĕн, ыр кăмăллăхшăн, çынна хĕрхенме пĕлнишĕн тав тума ирĕк парсамăр. Шурă халатлă çынсем чунпа ӳт-пӳ чирне сиплесе пациентсене шанăç парнелеççĕ, пурнăç илемне тавăраççĕ.

Халăх сывлăхĕ – пирĕн патшалăх политикин пĕлтерĕшлĕ тĕллевĕ. Юлашки çулсенче республикăри сывлăх сыхлавĕ çĕнĕ пахалăхлă шая тухрĕ. Ятарлă пулăшу тĕсĕсем хăвăрттăн аталанаççĕ. Амăшĕпе ачалăха упрас сферăра медицина пулăшăвĕн пĕрлехи системине туса хунă. Эпир йышăнакан мерăсем демографи лару-тăрăвне лайăхлатма май параççĕ. Кун пирки çĕршыв Президенчĕ Федераллă Пухăва янă Çырура каларĕ.

Чире асăрхаттарни сиплессинчен çăмăлрах. Профилактика ĕçне йĕркелесси, медицина пулăшăвĕн пирвайхи сыпăкне аталантарасси – республикăри сывлăх сыхлавĕн реформин тĕп çул-йĕрĕсенчен пĕри. Пирĕн республикăра йĕркеленĕ пĕтĕмĕшле практика врачĕн институчĕ хăйĕн эффективлăхне кăтартса пачĕ. Çĕнĕ оборудовани вырнаçтарнă 300 ытла офис халăха пахалăхлă пулăшу парать. Çакă уйрăмах ял çыннисемшĕн пĕлтерĕшлĕ.

"Сывлăх" наци проекчĕ пурнăç пахалăхне лайăхлатассипе паянах курăмлă утăмсем тума май пачĕ. Пирĕн республикăра ăна маларах пурнăçлама тытăннă. Наци проектне вăя кĕртни больницăсен пурлăхпа техника базине çирĕплетме çеç мар, медицина ĕçченĕсен статусне ӳстерме те май парать. Республикăра тăвакан федераллă центр халăха çӳллĕ шайри медицина технологийĕсемпе сипленме май парĕ.

Хаклă медиксем! Сире тата сирĕн çемйĕрсене пур пуçарура та ӳсĕмсем, ырă сывлăх, телей тата тулăх пурнăç сунатăп.

**Н. ФЕДОРОВ, Чăваш Республикин Президенчĕ.**

**СЫВЛĂХА СЫХЛАС ĔÇРЕ ВĂЙ ХУРАКАНСЕМ ТАТА ÇАК ĔÇĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ!**
**Сире професси уявĕ – Медицина ĕçченĕсен кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.**

Кашни çыннăн пурнăçĕнчи чи хакли вăл – сывлăх. Эсир вара ăна упрама вĕрентетĕр, чирлĕ çынна ура çине тăратассишĕн ырми-канми тимлетĕр. Мĕн чухлĕ чун ăшши, ырă кăмăл, сисĕмлĕх кирлĕ çакна валли. Хăвăрăн пархатарлă ĕçĕрпе çынсене савăнăçпа шанчăк парнелетĕр. Тавах сире çакăншăн.

Пурнăç паян хăвăрт улшăнать. Районти медицина учрежденийĕсенче вара халăх сывлăхне сиплемелли паянхи пурнăç ыйтакан пур условисене те тума тăрăшаççĕ. Эсир малашне те сывлăха эмелпе çеç мар, ырă сăмахпа та сиплессе, кашни çынпа ăшă кăмăллă пуласса шансах тăратăп. Çăмăл мар ĕçĕрте çĕнĕрен те çĕнĕ ӳсĕмсем тума ырлăх-сывлăх, телей сунатăп. Юратупа ăшпиллĕх чирлисем валли те, çемье валли те çиттĕрччĕ сирĕн.

**Ю.А. ИВАНОВ, район пуçлăхĕ.**

**УВАЖАЕМЫЕ МЕДИЦИНСКИЕ РАБОТНИКИ!**
**От всей души поздравляю всех с профессиональным праздником!**



В этот день мы чествуем всех, кто свою судьбу связал со здравоохранением. В течение всей жизни вы сохраняете людям здоровье, дарите радость и счастье, делая порой невозможное, подтверждая тем самым истинное предназначение и гуманность своей профессии. Ваша профессия и жизнь человека неразрывно связаны, вы стремитесь быть необходимыми людям и готовы в нужный час прийти им на помощь.

Высоко оценивая ваши деловые и человеческие качества, примите искренние слова благодарности и низкий поклон за ваш благородный труд, умелые руки и щедрость души.

В этот прекрасный июньский день желаю всем крепкого здоровья, личного счастья, оптимизма, профессиональных удач и успехов.

**Генеральный директор МУП "Страховая больничная касса" г. Новочебоксарска Депутат Государственного Совета ЧР О.Ю. Зайцева.**

Страховая больничная касса г. Чебоксары сердечно поздравляет всех медицинских работников с профессиональным праздником!

Самое ценное и дорогое для нас - это жизнь и здоровье. Нередко и то и другое мы доверяем вашим умелым рукам, вашему чуткому и отзывчивому сердцу. Спасибо вам за сопереживание, участие и заботу.

У каждого из нас найдутся самые теплые слова благодарности и признательности за ваш нелегкий труд и готовность прийти на помощь в любую минуту. Вы помогаете обрести вновь не только здоровье, но и жизненные силы, а главное уверенность в том, что можно преодолеть любой недуг. Ваши добрые и обнадеживающие слова лечат порою лучше, чем лекарства.

Особые слова благодарности хочется сказать тем, кто и в этот праздничный день будет находиться на своем посту, дежурить в больницах, роддомах, бригадах скорой помощи.

От всей души желаем вам крепкого здоровья, оптимизма, успеха и удачи в вашем нелегком, но благородном деле.

**С уважением генеральный директор И.В. КЛЕМЕНТЬЕВА.**

## Уй-хирсенче

**Çĕртме уйăхĕн çурринчен иртнĕ май çĕр ĕçченне умри утă уйăхĕ те шухăшлаттарать. Утă уйăхĕ выльăх апачĕ хатĕрлемелли тапхăр, çитес хĕл кунĕсенчи тулăх пурнăç никĕсĕ. Ĕнерхи куна районта "симĕс ĕççи" пуçланчĕ ĕнтĕ. "Восток", Ильич яч. хис., "Оринино", "Ударник", Чапаев яч. хис. хуçалăхсенче нумай çул ӳсекен курăксене çулма тухрĕç те. Вĕсем çак ĕçе 87 гектар çинче пурнăçларĕç. Нумай çул ӳсекен курăксен лаптăкĕ вара районĕпе пурĕ 10970 гектар. Кунсăр пуçне 1713 гектар пĕр çул ӳсекен курăксем. Çаксенчен тата улăх-çарансенчен хуçалăхсен пурĕ 12752 тонна утă, 25222 тонна сенаж, 21030 тонна силос хатĕрлемелле. Мĕнех, телейлĕ утçи пултăр çĕр ĕçченне!**

## Ĕçре палăрнăшăн

# Хисеп грамотипе наградăланă

Район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

Нумай çул ăнăçлă ĕçленĕшĕн тата обществăлла ĕçе хастар хутшăннăшăн:

**Зоя Николаевна МАЛЫГИНАНА**, Муркаш райповĕн "Центральнăй" магазин ертӳçине;

**Нина Макаровна СОРОКИНАНА**, Мăн Сĕнтĕр райповĕн тĕп бухгалтерне.

Халăх сывлăхне сыхлас ĕçре тунă çитĕнӳсемшĕн:

**Татьяна Аркадьевна СКВОРЦОВАНА**, Кашмашри фельдшерпа акушер пункчĕн фельдшерне.

Культура сферинче нумай çул ăнăçлă ĕçленĕшĕн:

**Тамара Тимофеевна ВОСТРЕЙКИНАНА**, Калайкассинчи Культура çурчĕн директорне.

Библиотека сферинче нумай çул ăнăçлă ĕçленĕшĕн:

**Юлия Геннадьевна УТКИНАНА**, ял тăрăхĕнчи Мулкачкасси библиотекин ертӳçине.

## Саламлатпăр



Пирĕн юратнă анне **Надежда Никандровна ГОЛИШНИКОВА** вăтăр çула яхăн пуçламăш класс ачисене вĕрентрĕ. Вăл вĕрентнĕ ачасем ăна яланах ырăпа асăнаççĕ, вăл паян кун та вĕсемшĕн ырă тĕслĕх.

Эпир те, унăн ачисем, хамăр аннепе мухтанатпăр, ăна 60 çулхи çак юбилей ячĕпе чунтан саламлатпăр.

Юратнă аннеçĕм, санăн малаллахи кун-çулу вăрăм, ватлăху канлĕ, сывлăху çирĕп пултăр.

**Ывăлĕпе хĕрĕ, кинĕпе кĕрӳшĕ, 4 мăнукĕ, тăхлачисем, хăтисем, кӳршисем.**

**Людмила Валентиновна МОРЕВА** 32 çул Мăн Сĕнтĕрти çăкăр заводĕнче вăй хурать. Ĕç биографийĕ унăн çак предприятире пуçланнă, паян та вăл кунта вăй хурать. Малтан - бухгалтер, халĕ - тĕп бухгалтер. Хăйĕн тивĕçне ответлăха туйса пурнăçлать, хăйĕнчен те, ыттисенчен те çирĕп ыйтать.

Эпир ăна юбилей ячĕпе пĕтĕм кăмăлтан саламлатпăр, вăрăм ĕмĕр, çирĕп сывлăх сунатпăр.

**Коллектив ĕçченĕсем, тăванĕсем.**

## Çырава хатĕрленсе

# Кадрсем çителĕклĕ

Пĕтĕм Раççейри ял хуçалăх çыравĕ пуçланиччен вунă кун ытларах çеç юлчĕ. Çырав вăхăтĕнчи тĕп ĕç, тĕп йывăрлăх çыравçăсемпе инструкторсем çине тиенет. Чи кирли вара кунта – çырав хучĕсене тĕрĕс çырма пĕлни. Районти вунсакăр инструктора ял хуçалăх çыравне ирттерессишĕн яваплă С.Ф. Кириллова уполномоченнăй, вĕрентӳ ирттерсе, тивĕçлĕ удостоверенисем пачĕ.

Июнĕн 19-мĕшĕнче район администрацийĕн çуртĕнче тата 112 çыравçă вĕренĕç. Палăртмалла, çырава хутшăнакансенчен чылайăшĕ аслă пĕлӳ илнĕ, ку тĕлĕшпе ĕç опычĕ пухнă.

## ПАЯНХИ НОМЕРТЕ


**2 стр. - Акатуйра савăнчĕ ял çынни.**
**3 стр. - Ялсене тирпей-илем кĕртессипе – смотр-конкурс.**
**4 стр. - Телепрограмма.**
**5-6 стр. - Пай çĕрĕсен хуçисен пĕлтерĕвĕсем.**
**7 стр. - Медицина ĕçченĕсен уявĕ.**
**8 стр. - Эрех пурнăçа пĕтерет.**